*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЭРНЕ КУН

9 (2421) №
Хакĕ ирĕклĕ

1991 çулхи ака уйăхĕн
21-мĕшĕнче тухма тытăннă

2014,
нарăс, 7

КАНУ КУНĔН КĂЛАРĂМĔ

ЧĂВАШ ЕН | ЯЛ-ЙЫШ | КИЛ | ХŬТЛĔХ | СЫВЛĂХ | ТĔПЕЛ

ШУХĂШ

## Ăсмассерен аш турамĕ лекмĕ

Виçĕ уйăх каялла кăна-ха республикăри мĕн пур категорири хуçалăхра 202,9 пин сысна юлнă тесе çыртăмăр. Паянхи цифра тата пĕчĕкрех – 167 пин. Ял хуçалăх министерстви çулталăкра 36 пин пуç (18 процент) чакнине палăртать. Вăл шутран ял хуçалăх организацийĕсенче 11800 пуç каталнă, ял халăхĕн – 21 пин, фермер хуçалăхĕсен – 3 пин. Иртнĕ çул туса илнĕ мĕн пур аш-какайăн 30 проценчĕ – сысна тӳпи. Юлашки виçĕ çулта сысна ашĕ туса илесси 7,7 процент чакнă.

Кăçалтан республикăри 6 районта – **Канаш, Сĕнтĕрвăрри, Пăрачкав, Вăрмар, Çĕмĕрле, Тăвай** – ял хуçалăх предприятийĕсенче сысна тытмаççĕ. Мĕншĕн?

– Сысна шучĕ нумаях та пулман вĕсенче. Çавăн пекех фермăсем ветеринари йĕркисене тивĕçтереймен, – пĕлтерет ял хуçалăх министерствин пай пуçлăхĕн çумĕ Светлана Мясникова. – Иртнĕ çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне **Чăваш Енре сысна ĕрчетекен 79 хуçалăх пулнă, халĕ – 56.** Ял хуçалăх надзорĕн çирĕп йĕркисене тивĕçтерейменнисем тухса ӳкнĕ те ĕнтĕ.

Тухса ӳкнисен йышĕнче – Тăвай районĕнчи «Шимкусский» хуçалăх фермi те. Хăй вăхăтĕнче унта пин çурăран кая мар сысна тытнă. Юлашки çулсенче йышĕ палăрмаллах чакнă, çапах ял халăхне сутмалăх та, хăйсене тăрантармалăх та çиткеленĕ темелле.

– Африка чуминчен хӳтĕленсе профлистпа 3 метр çӳллĕш карта тытмалла терĕç. Районтисем шутласа пăхнă – ытла хакла кайса ларать. Çитменнине пĕлтĕр тырă питĕ япăх пулчĕ. Унтан пĕр машина кӳрсе килетпĕр, кунтан ... Ĕне фермипулмасан сысна ферми ăçтан тытăнса тăтăр ĕнтĕ, – чун ыратăвне пытармасть ферма заведующийĕнче ĕçленĕ Надежда Федорова.

Ĕне ферми Сергей Илларионов фермер аллине куçнăранпа хуçалăх енчĕкĕ пушаннă. Тырă гектартан 6 центнер çеç тухайнă. Халĕ ав сысна ферми те çук. Юлашки 136 пуçа йӳнĕпех сутса пĕтернĕ. Амăшĕсĕр тăрса юлнă çурасене вара – тӳлевсĕр тенĕ пекех.

– Надежда Дмитриевна, унччен сысна пăхнисем халĕ ăçта ĕçлеççĕ?

– Хупăничен виççĕн кăна тăрса юлтăмăр. Пĕри пенсие тухса ĕлкĕрчĕ, тепри фермер патне пăру пăхакансене улăштарса тăма вырнаçам пекки турĕ. Хам çур ставкăпа хуралçăра, сысна фермине пăхса тăратăп. Пенсие тухма тата виçĕ çул юлнăччĕ...

Тăвай район администрацийĕн ял хуçалăх уйрăмĕн тĕп специалисчĕпе Елена Михайловăпа çыхăнсан «Красная Чувашия» хуçалăхра та сысна фермине хупнине пĕлтĕм. Хăй вăхăтĕнче кĕрлесе тăнă, хальхи район пуçлăхĕ Владимир Ванерке ертсе пынă хуçалăх ку. Унта та юлашки чушкасене 50-30 тенкĕпех (килограмшăн) парса янă-мĕн.

«Аграри секторĕн» сайчĕ иртнĕ çул Раççейри 12 регионта **Африка чумипе** çыхăннă 76 тĕслĕхе шута илнине хыпарлать. Тăкакне вун-вун миллиардпа виçеççĕ. 2012 çул пуçламăшĕнче хăрушă мур ернипе Кубаньри ăратлă сысна ĕрчетессипе ĕçлекен «Индустриальный» заводра 30 пин пуç пĕтернĕ. Çав çулах çулла Краснодарти «Данко» комплексра – 16 пине яхăн.

Нумаях пулмасть Мускав облаçĕнчи Истра районĕнчи сунарçă хуçалăхĕнче хир сыснисен хушшинче Африка чуми сиксе тухни лару-тăрăва пушшех çивĕчлетнĕ. Чумапа çыхăннă ыйтăва Раççей правительствин шайĕнче пăхса тухнă, хăрушă амакпа кĕрешмелли сĕнӳсем тăратма хушнă.

2-мĕш стр. ➔

| ÇАНТАЛĂК: Шупашкарта | Вăхăт | 7.02 | 8.02 | 9.02 | 10.02 | 11.02 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Температура, °C | 2-4 сехетре | –24 | –18 | –12 | –11 | –7 |
| | 14-16 сехетре | –18 | –11 | –9 | –7 | –3 |
| Юр çăвать | | – | – | ⁂ | ⁂ | ⁂ |
| Атмосфера пусăмĕ, мм. | | 758 | 756 | 758 | 755 | 755 |

КĔСКЕН

### ПАЯН, НАРĂСĂН 7-МĔШĔНЧЕ СОЧИРЕ ХĔЛЛЕХИ ОЛИМП ВĂЙИСЕМ УÇĂЛАÇÇĔ

**Нарăсăн 20-21-мĕшĕсенче Шупашкарти Николаев космонавт урамĕнчи суту-илӳ комплексĕнче регионсен хушшинчи «Çĕр улми – 2014» курав иртĕ. Унта хамăр çĕр-шывра тата чикĕ леш енче туса кăларнă тĕрлĕ сортпа паллашма, çĕр улмине туянма май килĕ.**

**Иртнĕ çултанпа Чăваш Енре республикăри çуртсене тĕпрен юсамалли тытăм йĕркелеççĕ. Строительство министерстви нумай хваттерлĕ çуртсене тĕпрен юсама палăртмалли программăна туса пĕтернĕ. Унта нумай хваттерлĕ 4692 çурт кĕнĕ. Çак уйăхра программăна ЧР Министрсен Кабинечĕн ларăвĕнче пăхса тухĕç.**

**Республикăра усă курнă энергишĕн пухăннă парăма татас тĕллевпе çине тăрсах тăрăшаççĕ. Кăрлачăн 24-мĕшĕ тĕлне пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх организацийĕсен парăмĕ 2334 млн тенкĕпе танлашнă.**



**ПАЯН** кун тăршшĕ 9 сехет те 02 минут. Уйăх тулса пырать.
Çуркунне мĕнле пуласса кăтартакан Кĕркури кунĕ. Кăнтăрлаччен-хи çанталăк çитес хĕлĕн пĕрремĕш çур çулĕ епле пуласса систерĕ, кăнтăрла хыççăнхи – хĕлĕн иккĕмĕш çуррине.

**ЫРАН** – вилнисене асăнмалли Хĕветĕр кунĕ. Çак кун çут тĕнчерен кайнисем çĕршĕн, тăванĕсемшĕн тунсăхлаççĕ-мĕн. Вĕсене лăплантарма кăмака умне кĕл сапса çапла каламалла: «Тăлăх чунсем картишре ан çӳрĕр, анăç енне кайăр, унта сире ĕмĕрлĕх савăнăç кĕтет».
Кунĕ мĕнле – çуркунне те çапла пулĕ тенĕ.

**ВИÇМИНЕ** – Иоанн Златоуст кунĕ. Кăмака хутнă чухне пуленкесем пĕр харăс хыпса илчĕр тесе тăрăшнă. Çакă çемьери тăнăçлăхпа çитлĕхе пĕлтернĕ. Çавăнпа вуттине те малтанах типĕтсе хатĕрленĕ, хăйă чĕлсе хунă.

ПАХЧИ-ПАХЧИ

## Уйăха пăхса

Кая юлса пулакан пăрăç, помидор, баклажан вăрлăхне **нарăс уйăхĕн 10-11-мĕшĕсенче** акмалла. Вăрлăха çак кун шӳтерсе хурса урăх кун аксан та темех мар, тухăçлăхĕ çав кун акнă чухнехи пекех лайăх пулĕ. Çав кунсенчех, тулакан уйăх Рак паллинче чухне, калчалăх çĕр çырли (земляника) акма юрать.

**Нарăсăн 15-мĕшĕнче**, тулли уйăх вăхăтĕнче, ӳсен-тăранпа пачах ĕçлеме хушмаççĕ.

**Нарăсăн 17–21-мĕшĕсенче** чечек вăрри (бегони, лобели, примула, сальви, пеларгони) акмалла. Гладиолуспа георгин тымарĕсем мĕнлерех хĕл каçнине тĕрĕслемелле.

**Нарăсăн 13, 14, 27, 28-мĕшĕсенче** нимĕнле вăрлăх та акма юрамасть.

## Васкас мар

Калчалăх помидор вăррине нихăçан та васкаса акмастăп. Пуш уйăхĕнче те ĕлкĕрет. Кун тăршшĕ вăрăмланать, хĕвелĕ ытларах пăхать. Ун чухне вăл лайăххăрах та çитĕнет. Нарăс уйăхĕнче акнинчен те часрах чечеке ларать.

**Пуш уйăхĕнчи калчан пирвайхи чечек çупкăмĕ 45-50 кунтан тухать, нарăс уйăхĕнче акнин – 85-90 кунтан.**

**1** Калча ӳстерекен пӳлĕмре кăнтăрла 22-24 градус, каçхине 16-18 градус ăшă тытма тăрăшатăп.

**2** Калча çитĕнекен савăтри çĕр яланах нӳрлĕ пулмалла. Тăпра ытла типсе кайни е нӳрленсе тăни лайăх мар. Ӳсен-тăрана асăрханса тунипе çулçине йĕпетмесĕр шăвармалла тăрăшмалла. Кăнтăрлаччен шăварсан аванрах.

**3** Çутă çителĕклĕ пулсан калча çирĕп ӳсет. Ăмăр кунсенче лампочка çутни лайăх.

**4** Виçĕ хут апатлантармалла. Пĕрремĕш хут – калча шăтсан 7-мĕш кунне (торф оксидачĕпе, 1 л шыва 1 мл), иккĕмĕш хут – куçарса лартнă хыççăн 5-6 кунтан, виççĕмĕш хут – тата тепĕр 2 эрнерен. Апатлантарма нитрофоска хутăшĕпе усă куратăп (унта азот – 5 процент, фосфор – 16 процент, кали – 32 процент, 1 л шыва 1 чей кашăкĕ хушмалла).

**Лидия ПАХОМОВА.**

***Дачăри çуртра шăшисем хуçаланаççĕ-и? Апла унти мĕн пур кĕтесе, шкапсене пĕтнĕк куракĕ е пĕтнĕк настойкине йĕпетнĕ пусма татки хурса тухăр – вĕсем çак шăрша чăтма пултараймаççĕ.***

***

***Шывра пĕр талăк тытнă кăмрăк лайăххăрах çунать. Шывпа лайăх сăрхăнса çитнĕскере кăмакана пăрахсан ăшши пушшех вăйланать.***



ХАЛĂХ САНАВĔ

Нарăс уйăхĕ хĕл урине хуçать, тумлам юхтарать, виçĕ сехет хушать. Нарăс сивĕ те уяр пулсан – çурла уйăхĕ шăрăх пулĕ, ăшă тăни – çуркунне сивĕ килессе. Уйăх вĕçĕнче вăрăм пăрлашка (тумла пăрĕ) нумай пулни – çур вăраха каясса. Нарăсăн юлашки эрни мĕн чухлĕ сиверех – пуш уйăхĕ çавăн чухлĕ ăшăрах. Çумăр çусан – çуркуннепе çулла та çаплах пулĕ.

СĔНӲ-КАНАШ

✓ Вăрлăх акма хатĕрленекен çĕре сиенлĕ япаласенчен тасатас тетĕр пулсан çак меслетпе усă курăр: акиччен пĕр эрне маларах кĕл шывĕпе сапăр. 3 л шыва 500-600 г алланă кĕл ямалла. Пăтратса тăрса вĕреме кĕртмелле, сивĕтмелле. Тăрăлса çитнĕ кĕл шывне таса шывпа (1:2) хутăштарса вăрлăх акмалли ещĕксене сапмалла.

✓Шултра вăрлăха (шалча пăрçи, нимĕç пăрçи, пăрса, арпус вăрри,) 3-5 см тарăнăшне вараççĕ, хĕрлĕ кăшман вăррине – 2-3 см, хăяр, редис – 1,5-2 см, сухан, кишĕр, петрушка – 1-2 см. Чи вĕттине (салат, сельдерей, çарăк) – 0,5-1 см, купăста, помидор, пăрăç вăррине 0,5 см тарăнăшне акаççĕ.

✓ Арпус, дыня, хăяр, кабачок, патиссон, кавăн вăрри 8 çулччен упранать, пăрçапа шалча пăрçи – 6 çул, редис, йӳç кăшман, çарăк, купăста, помидор – 5, кишĕр, пăрăç, баклажан, салат, шпинат вăрри – 4, сухан, петрушка, укроп, спаржа, кăшкар ути (щавель), ревень – 3, пастернак, сельдерей – 2 çул.

КИЛ КАРТИ

## Хĕлле – пăшăхласа

Хĕлле ĕнене утă-улăм туранчăкне вĕри шывпа пăшăхласа памалла. Унтах пĕсернĕ çĕр улмипе пĕрле комбикорм, кишĕр, чĕрĕ выльăх кăшманĕ е кавăн (вĕтетсе), çавăн пекех хĕвел çаврăнăш турантипе (жмых) çăнăх хушсан лайăх пулмалла.

Паллах, кашни кун утă памалла. Улăма та юратса çитĕр тесен вара ăна çапла хатĕрлемелле: пĕрре çитермелĕх илнĕ улăм çине вĕреме кĕнĕ пĕр витре шыв ямалла, тăварпа комбикорм хушса хупламалла. Ик-виçĕ сехетрен хайхине валашкана хурса памалла.

# Ăсмассерен аш турамĕ лекмĕ

1-мĕш стр.

Специалистсемпе экспертсен шухăшĕпе – йывăр лару-тăрура пурне те тивĕçтерекен меслет тупма питĕ хĕн. Ирĕксĕрех анăçри çĕр-шывсем хыççăн кайма тивĕ-ши? Унта килти хушма хуçалăхра сысна усрама пачах чарнă. Сăмах май, **Краснодар тăрăхĕ çак çул çине тăнă та ĕнтĕ. Килти хуçалăхра сысна тытма чарнипе пĕрлех ун вырăнне сурăх усрама сĕнеççĕ. Сурăх тытма килĕшекенсене 1 кг чĕрĕ виçе пуçне 40 тенкĕ парса хавхалантарма пăхнă.**

Аналитиксем 2012 çулта сысна ашĕн хакĕ 20 процент чакнине çирĕплетеççĕ. Тĕп сăлтавĕсенчен пĕри – ютран килекенни хĕсce пыни. Пĕтĕм тĕнчери суту-илӳ организацине (ВТО) кĕнĕ хыççăн аш хакĕ тăруках чакса кайрĕ. Сысна ашĕн хăй хаклăхĕ 67 тенкĕпе (килограмшăн) танлашнă чухне вырăн-вырăнпа вăл 65 тенкĕпе те аран-аран сутăнчĕ.

РФ Аш-какай туса илекенсен пĕрлĕхĕн ертӳçи Мушег Мамиконян сăмахĕсем тăрăх – 2012 çулта Раççее 650 пин тонна яхăн сысна ашĕ, сысна ӳпки-пĕверĕпе пуç-уринчен хатĕрленĕ 500 пин тонна çимĕç, 570 пин тонна ĕне ашĕ тата 550 пин тонна кайăккĕшĕк какайĕ кӳрсе килнĕ. Иртнĕ çул та сахал мар турттарнă. Малтанлăха шутласа палăртнă тăрăх – сысна отраслĕнчи тăкак 50 млрд тенкĕ.

Унта та кунта сиксе тухакан Африка чуми кăна çитменччĕ пире!

– Чăваш Республикинче ку тĕлĕшпе хальлĕхе лару-тăру лăпкă, – пĕлтерет патшалăх ветеринари службине ертсе пыракан Сергей Скворцов. – Пысăк комлекссене сыхласа хăварассишĕн хамăртан мĕн килнине пĕтĕмпех тăватпăр. Вырăх апатĕнчен пуçласа предприятие кĕрекен машина урапи таранах тĕрĕслетпĕр. Нимĕнле йĕке хӳре тавраш̆е те чупмалла мар. Сыснасене хупă витере кăна тытмалла. Сыхă пулнине нимĕн те çитмĕ. «Çĕрпӳ беконĕ» пĕрлешӳре кăна 30 пин ытла сысна. Мур çакланас пулсан калама çук пысăк çухату пулать вĕт. Миллион-миллион тенкĕлĕх. Вĕсемшĕн кăна мар, таврари 100-150 çухăмрисемшĕн те. Вăрнарти аш-какай комбиначĕ, «Юрма» агрохолдинг, «Рассвет», «Сувар-2» тата ытти предприятире те сысна йышлă. Çакна та каласа хăварам: **хальччен комплекссем тавра 5 çухрăмлă буфер зони пулнă-тăк, халĕ çĕнĕ правилăсемпе килĕшӳллĕн чару чикки 500 метр юлнă.**

Лавккари какайпа тăранма йывăр. «Буш урине» çисе куртăмăр – каялла тухать. Пасарта туяннă сысна ашĕ кăмăла каймасть, тирĕ те йĕркеллĕ сĕвĕнмест-çке. Чăваш халăхĕ мĕн ĕлĕкрен сысна усранă: тăранмалăх та, тупăш курмалăх та. Мĕншĕн тытмалла мар-ха? Сысна ӳстермелĕх 5 центнер тырă туянаймастпăр-и? Çĕр улми ахалех пур, апат-çимĕç юлашки те çук мар. **Ветеринарсем сысна апатне лавкка çимĕçне яма хушмаççĕ. Калăпăр, кăлпассипе сосиска тавраш̆не. Вĕсене мĕнрен хатĕрленине халĕ никам та тĕрĕс пĕлеймĕ.** Бегемот какайĕнчен пуçласа шăши хӳри таранах пур-тăр унта. Хушасах тесен вара пĕçерсе ямалла. Африка чумин вирусĕ 70 градуçра вилет. Турра шĕкĕр, çак мур çынна ерменни савăнтарать.

Ача чухне урама тухса кайнă сыснана хăвалана чух такамран илтнĕ сăвă йĕркисене каласа чупаттăмăр:

Ăннарат, ăннарат,
Сысна улма кăларать:
Вĕттине те, шултрине те
Хăй хырăмне тултарать.

Çитĕнекен ăру кунашкал йĕркесене пĕлменни нимех те мар, вĕсем сыснине курма пăрахмасан та тем пекехчĕ.

Елена НИКОЛАЕВА.

## КĔСКЕН

**Ачаллă граждансене паракан патшалăх пособийĕсен виçисене ӳстернĕ. Çие юлнă хĕрарăмсем малтанхи тапхăртах учета тăрсан паракан пĕр хут тӳлекен пособи – 515,33 тенкĕ; ача çуралсан пĕр хут тӳлекен виçе – 13741,99 тенкĕ; пĕрремĕш ачана пăхнăшăн уйăхсерен паракан чи пĕчĕк пособи – 2576,63 тенкĕ; иккĕмĕш е ун хыççăнхи ачана пăхнăшăн тивĕçекенни – 5153,24 тенкĕ.**

**Ку тĕнчерен уйрăлса кайнă çынна юлашки çула ăсатмашкăн уйăракан укçа 5002,16 тенке çитнĕ.**

## ЭСИР ЫЙТНĂЧЧĔ

### «Кĕçĕтнипе çывăраймастăп»

**? Хисеплĕ редакци. Хама канăç паман ыйтупа чăрмантаратăп сире. Кутана кĕçĕтнипе нушаланатăп, çывăрайми пултăм. Уйăх ытла асапланатăп. Тухтăрсем çырса панă супрастина та ĕçетĕп – усси çук. Этемĕн тем мурĕ те пур пулĕ. Чунтан тархаслатăп, пулăшсамăр.**

**ПЕТРОВА. Вăрмар.**

Сирĕн ыйтăвăра медицина наукисен кандидачĕ Василий Средняков хуравлать:

– Кутана тăтăшах кĕçĕтни тĕрлĕ сăлтавпа сыхăнма пултарнă. Калăпăр, нерв тытăмĕ пăсăлнипе, апат ирĕлтерекен орган чирĕсемпе, диабетпа, веществосен çаврăнăшĕ пăсăлнипе, тӳрĕ пыршă чирĕсемпе (геморрой, кутана шăтăкĕ çуркаланни, шыçă чирĕ, шăтан-юхан), инфекци чирĕ е шĕвĕрĕлчен ернипе. Ӳт-тир чирĕсемпе (крапивница, экзема, псориаз, кĕçĕ чирĕ) тĕрлĕ тĕслĕ аллерги те кĕçĕтет. Пыршăлăх микрофлори улшăннипе е геморрой пуçланипе те сыхăнма пултарнă.

Апат-çимĕçе питĕ уяса çимелле. Пăрăçлă та тăварлă апатпа эрех-сăра пачах юрамасть. Сахал çес çимеллисен йышне сахăр, пыл, шăккăлат, çăмарта, цитрус çимĕçĕ, консервăсем кĕреççĕ. Кутана кĕçĕтнĕ чух полькортолон, флуцинар, бетаметазон, синалар пулăшĕ. Шала ĕçме кларитин, гисталонг, димедрол, тавегил çырса парӑççĕ.

Таса пурăнмалла. Пысăккипе тула тухмассерен кутанана шывпа çумалла. Хаçатпа ытти чĕркемелли хутпа шăлма юрамасть. Вар хытасран асăрханăр. Кĕçĕтни шĕвĕрĕлчен чирĕпе çыхăнсан пиперезин, левамизол, комбантрин усă курмалла. Левамизол е декарис текеннине пĕр хут çеç ĕçмелле (çитĕннисен 150 мг).

Ытти сăлтава та асăнма пулать. Калăпăр, порошок, дезодорант тавраш̆ĕ, синтетикăран çĕленĕ тăвăр тумтир, ытла самăр пулни...

Шăши тикенекĕ (череда), салтак тӳми, хурăн кăчки хушса 20-25 минут ванна кĕни кĕçĕтнине иртт ерме пулăшĕ. Çавăн пекех çак рецептсемпе те усă курма юрать.

1 пай шĕпĕн курăкĕ (чистотел), 3-шер пай мулкач курăкĕ (тысячелистник), сар çип ути (зверобой) илсе хутăштармалла. Тин вĕретнĕ 1 стакан шыва курăк хутăшне 2 кашăк ярса ăшă вырăнта 2 сехет тытмалла. Кунне 3-4 хут çуршар стакан ĕçмелле.

Пĕр тан виçепе салтак тӳми, мулкач курăкĕ, пĕтнĕк курăкĕн çулçи, çăка чечекĕ илсе хутăштармалла. Вĕреме кĕнĕ 1 стакан шыва курăк хутăшне 2 кашăк ярса 5 минут вĕретмелле, икĕ сехет тăрăлтарса лартмалла. Сăрăхтармалла, кунне 3 хут, çуршар стакан ĕçмелле.

Кĕçĕтекен вырăна вĕретнĕ тип çупа сĕрни вăхăтлăха лăпланма пулăшĕ.

### Хăшĕ лайăхрах?



**? Холестерин сиенĕ çинчен калаçнине часчасах илтме пулать. Çав вăхăтрах холестеринĕ «лайăххи» те «начарри» те пур-мĕн. Мĕнле уйрăмлăх-ши вĕсен хушшинче?**

**Надежда ЯКИМОВА.**

Холестерин тем пек сиенлĕ пулсан та организма кирлĕ клеткăсемпе гормонсем тума кирлĕ. Ытти çу пекех холестерин шывпа хутăшмасть. Çавăнпа организм холестеринпа çăва юнпа пĕрле куçарма хăйне евĕр чĕркеме чикет. Медицина чĕлхипе çакна липопротеинлани теççĕ.

Чĕркемре тачă çыпăçманнине начар холестерин теççĕ. Юн тымарĕсене холестерин пухăнни шăпах çакăнпа çыхăннă та ĕнтĕ. Çăтăлăхĕ пысăккине лайăх холестерин теççĕ. Унта протеин ытларах, холестерин сахал. Специалистсен шухăшĕпе – çăтă протеин юн тымарĕсем çумне çыпăçнă холестерина çуса ярса ăна организмран кăларма пĕвере куçарать.

**Кофе тата холестерин.** Ученăйсем питĕ вĕри кофе ĕçме хушмаççĕ, ăна вĕреме кĕртмесен лайăхрах та. Кофе вĕренĕ вăхăтра унта холестерин шайне ӳстерекен япаласем пухăнаççĕ.

*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*

## ПЕНСИ

### Вăтамран – 615 тенкĕ

– Нарăсăн 1-мĕшĕнчен ĕç пенсийĕ 6,5 процент таран ӳсет, – пĕлтерет РФ Пенси фончĕн Чăваш Енри уйрăмĕ. – Пирĕн республикăра 324 пин çыннăн пенсийĕ хăпарать. Ĕç пенсийĕ вăтамран 615 тенкĕ ӳссе 10,2 пин тенке çитĕ. Ку пенсионера пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçерен (2013 çулхи тăваттăмĕш кварталта 4963 тенкĕ пулнă) 2 хут ытларах. Хальхи вăхăтра пенсионерсен 84 проценчĕ ĕç пенсийĕ илет. Ака уйăхĕн 1-мĕшĕнчен ăна тепĕр хут пăхса тухĕç, ун чухнех социаллă пенси илекенсен, федераци çăмăллăхĕсене тивĕçекенсен укçине, соцпакет хакне ӳстерĕç.

### Стаж та, взнос та кирлĕ

**? Юлашки вăхăтра пенси реформи çинчен нумай калаçаççĕ. Сахалтан та 15 çул стаж кирлĕ теççĕ. Эпĕ пасарта тавар сутатăп, анчах предприниматель свидетельстви илмен, налук тӳлеместĕп. Кăçал 32 çул тултаратăп, стаж çук, икĕ ачана пăхнă тапхăр çеç кĕрет. 15 çул стаж пухса ĕлкĕреймесен пенсие мисере тухатăп-ши? Манашкал стажсăр ĕçлекенсем тата та пур.**

**Светлана МАРКОВА. Шупашкар.**

Сирĕн ыйтăвăра Раççей Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕ пăхса тухса çакăн пек хурав пачĕ:

– Халĕ пенси страхлав пайĕнчен тата пухăнса пыракан пайран тăрать. 2015 çултан страхлав пенсийĕ тата пухăнса пыракан пенси уйрăм пулаççĕ. Страхлав стажне социаллă пĕлтерĕшлĕ тапхăрсем те кĕрĕç: çарта пулни, 1,5 çул тултариччен ачана, инвалид ачана, пĕрремĕш ушкăн инвалидне, 80 çултан аслăрах ватă çынна пăхни. Страхлав стажĕ 15 çултан, уйрăм пенси коэффициенчĕ 30 балран кая мар пулсан хĕрарăмсем пенсие 55 çулта, арçынсем 60 çулта тухĕç. Çак условисем çыннăн шалăвĕ ĕç укçин чи пĕчĕк виçинчен (МРОТ) 2 хут кая мар чух çеç (5554х2) пурнăçланаççĕ, сахалрах пулсан 15 çул стаж пухни çителĕксĕр. Страхлав пенсийĕ илме ирĕк çуккисене социаллă пенсипе тивĕçтереççĕ: хĕрарăмсене – 60 çула çитсен, арçынсене 65 çул тултарсан.

Енчен те эсир ытти сем пекех 55 çулта пенсие тухас тетĕр пулсан сирĕн уйрăм пенси коэффициенчĕ 30 балран кая мар пулмалла. Коэффициент виçине ĕçленĕ кашни çулшăн официаллă шалуран тӳленĕ страхлав взносĕнчен палăртаççĕ. Ĕç укçи мĕн чухлĕ нумайрах, коэффициенчĕ çавăн чухлĕ пысăкрах пулĕ. Çĕнĕ йĕркепе ачасене çулталăк çурă тултариччен пăхнăшăн пенсин уйрăм коэффициенчĕ хушăнать: пĕрремĕш ачана **пĕр çул** пăхнăшăн 1,8 балл, иккĕмĕшĕшĕн – 3,6 балл. Çапла вара икĕ ачине те çулталăк çурă пăхсан 8,1 балл (1,8+0,9+3,6+1,8=8,1) хушăнать.

Предпринимательсен, хăйсене хăйсем ĕçпе тивĕçтерекенсен пенси çинчен малтанах шухăшламалла. 2014 çултанпа предпринимательсем 300 пин тенкĕрен сахалрах тупăш илсен – ĕç укçин чи пĕчĕк пĕр виçи чухлĕ страхлав взносĕ тӳлеççĕ. Кун пек чухне пĕр уйăх тӳлевĕ 1444 тенкĕ те 4 пуспа танлашать (5554 тенкĕ х 26% ), çулталăка – 17328 тенкĕ те 48 пус. Ку виçепе тӳлесен страхлав пенсийĕпе тивĕçлĕ канăва тухма стаж 15 çул çеç пулни çителĕксĕр. Саккунпа килĕшӳллĕн предпринимательсен çӳлерех асăннă виçерен нумайрах тӳлеме май пур.


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ПРОДАЮ

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**4. Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7. Срубы для бани.** Доставка по ЧР. Т. 372874.

**14. Станки** для валяния валенок. Т.: 89278617589, 89373810585.

**15. Кирпич, брусчатку, кольца,** ОПГС, песок, КБ. Т. 89613393363.

**16. Сетку-рабицу** от произ-ля, черную, зеленую, оцинкованную – около 100 видов, сетку сварную, **столбы,** скобы, **проволоку,** калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 89379522211.

**19. Гравмассу, песок, щебень,** торф, кирп. бой. Т. 8-903-322-57-66.

**20. Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдете дешевле – уступим. Без. вых. Т. 89625989686.

**22. ОКНА пластиковые, железные ДВЕРИ.** Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**24. Грабли, косилки, сажалки,** копалки, окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

**33. Гравмассу, песок, керамзит,** щебень, торф . Доставка. Т. 89053465671.

**35. Блоки керамзитобетонные** вибропрессованные, пропаренные. Дешево. Т. 89373866629.

**43. Натяжные потолки** за 1 день от 350 руб. Т. 89373972442.

**45. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.

**47. Керамблоки** 20х20х40 от производителя. Т.: 8-903-389-90-38, 48-92-77.

ЧĂВАШ ЕН ЯЛ-ЙЫШ КИЛ ХŸТЛĔХ СЫВЛĂХ

ТĔПЕЛ

## КĔСКЕН

Çитес вăхăтра сутлăха «Чăваш апат-çимĕçĕ» кĕнеке çитĕ. Ăна Чăваш кĕнеке издательстви кăларнă. Кĕнекепе тимлесе паллашакансем хуплупа шăрттанран пуçласа какай шўрпипе çăмах яшки таранах пĕçерме вĕренĕç.

Ку таранччен ылтăн тата кĕмĕл медальпе шкул пĕтерекенсене çĕр-шыври чи лайăх аслă шкулсене экзаменсăрах илнĕ. Анчах юлашки çулсенче чи лайăх паллăпа вĕренекенсен йышĕ калама çук ўссе пырать. Медальпе хаклама пăрахаççĕ: ун вырăнне хĕрлĕ хупăллă аттестат пулĕ. Ыттисен – кăвакки. Кăçал шкул вĕренсе тухакансене шăпах çавăн пекки тыттарĕç.

Медалĕн ĕлĕкхи пĕлтерĕшĕ çухалчĕ тесен те юрать. Çакна кура Раççейре чи лайăх паллăпа вĕренекенсене медальпе хаклама пăрахаççĕ: ун вырăнне хĕрлĕ хупăллă аттестат пулĕ. Ыттисен – кăвакки. Кăçал шкул вĕренсе тухакансене шăпах çавăн пекки тыттарĕç.

## ПĔЛЕС ТЕНĔЧЧĔ

**?** **1986 çулта Мăнкун хăш куна килнĕ-ши?**

**Михаил. Елчĕк районĕ.**

**Муркаш районĕнчи Мăн Сĕнтĕр чиркĕвĕн настоятелĕ Игнатий атте (СУРАНОВ) хуравлать:**

– Православи тĕнĕпе пурăнакансем Мăнкуна çуркунне, кунпа çĕр танлашнă хыççăн, уйăх таврăнсан пĕрремĕш вырсарни кун уявлаççĕ. Вăл кашни çулах пĕр вăхăтра килмест. Анчах нихăçан та ака уйăхĕн 4-мĕшĕнчен маларах тата çу уйăхĕн 8-мĕшĕнчен каярах пулмасть.

Мĕнле пĕлмелле-ши чылайăшĕ чăтăмсăррăн кĕтекен уяв вăл е ку çул хăçан пулнине? Чи ансат меслет – тĕн календарĕпе усă курни. Халĕ вĕсене пур çĕрте те сутаççĕ. Священниксенчен те ыйтса пĕлме юрать. Анчах тĕрех асăрхаттаратăп: чиркÿ çыннисем те Мăнкун хăçан пулнине тĕрех калаймĕç, мĕншĕн тесен çакна шутласа кăларма çăмăлах мар. Ытларах чухне хамăр та календарьсемпе усă куратпăр. Кăçал Мăнкун – ака уйăхĕн 20-мĕшĕнче. Сире кăсăклантаракан çул вара питĕ кая юлса – çу уйăхĕн 4-мĕшĕнче – килнĕ.

**?** **Анне сĕлĕ пăтти юратать. Чирлесен тўрех çавна пĕçерет. Эпĕ вара пахча çимĕçĕнчен усăллăраххи çук тесе шухăшлатăп. Иксĕмĕртен хăшĕ тĕрĕсрех-ши?**

**Ольга АЛЕКСЕЕВА.**

**Шупашкар районĕ, Лапсар.**

Ученăйсене ĕненес пулсан сĕлĕ усăллăрах. Тăтăшах сĕлĕ пăтти çисен чĕрепе ытти орган чирлесси 30-50 процент таран чакать. Сĕлĕре кальци, кали, цинк, фтор, пектин, А, С, Е, РР, $B_6$, $B_{12}$ витаминсем пур. Хырăмлăхпа пыршăлăх тракчĕн чирĕсем, сахăр диабечĕ, шăк çулĕсенче чул пулсан та сĕлĕ пăттинчен лайăххи çук. Тăтăшах ыйăх килсен, хавшаса çитсен, мышцăсем ыратсан, кăмăл çав тери пусăрăннă вăхăтра сĕлĕ пăтти çиме сĕнеççĕ, мĕншĕн тесен унта биотин пур. Унсăр пуçне сĕлĕ пăтти организмран наркăмăшлă япаласене кăларма пулăшать. Начарланас текенсемшĕн те аван вăл.

Çакна та палăртмалла: сĕлĕ кĕрпи мĕн чухлĕ шултрарах, çавăн чухлĕ усăллăрах. Пĕчĕк тĕркемсемпе сутакан хăвăрт пиçекен сĕлĕ кĕрпин усси çукпа пĕрех.

## ЯЛ ИЛЕМĔ – КАПĂР ÇУРТ



Илемлĕ çурт проекчĕпе паллашас килет-и? Апла «Тăван Атăл» журналăн кăçалхи пĕрремĕш кăларăмне алла илме сĕнетпĕр.

## ЧИПЕРЛЕНЕР-И?

### Кĕвелĕкпе çумалла

Çўç пурçăн пек çемçе пултăр тесен эрнере пĕр-икĕ хут çакнашкал маска туса пăхăр. «Шыв мунчине» лартса пĕр стакан кĕвелĕк ăшăтмалла. 5 тумлам касторка çăвĕ хушса пăтратмалла. Хутăша çўçпе пуç тирне сĕрсе çатăрка хутаç тăхăнмалла, çиелтен ал шăллипе çыхмалла. Çур сехетрен ăшă шывпа çуса ямалла, хыççăн – шампуньпе.

## КУЛАР-И?

– Ĕнер пĕрле çўрекен хĕре хамăн мĕн пур çылăхăм çинчен каласа патăм!

– Вара, пулăшрĕ-и?

– Çук-çав... тепĕр эрнерен туй.

## КИРЛĔ ПУЛĔ

### Тутăх лекнине яма

• Тутăх тивнĕ кашăк-тирĕке малтан лимон сĕткенĕпе сăтăрмалла.

• Тутăхпа вараланнă вырăна шăл пастипе сĕрнĕ кивĕ шăл щеткипе сăтăрмалла.

• «Комет», «Доместос» йышши хими хатĕрĕсемпе усă курма юрать. Унпа вараланнă вырăна сапса нўрлĕ татăкпа сăтăрмалла, ахаль чухнехи пекех çуса ямалла.

• Тĕрлĕ тĕслĕ япала çинчи тутăха пĕр тан виçепе илнĕ шыв, çăнăх пек вĕтетнĕ пурă тата глицерин хутăшĕпе сĕрмелле, 9-10 сехетрен супăньпе çуса ямалла.

### Уксус пулăшĕ

Алăран пулă шăрши кĕрет-и? Апла ăна уксус хушнă шывпа çумалла (2 л шыва 1 чей кашăкĕ уксус).

Типсе кайнă горчицăна темиçе тумлам уксус хушсан вăл тин тунă чухнехи пек пулĕ.

Соуспа хатĕрлекен аш-какай çине 1-2 кашăк 9 процентлă уксус хушсан çав тери çемçе пулĕ.

Ешĕл çимĕçе 1 кашăк апат-çимĕç уксусĕ хушнă шыва ярсан – тин татнă чухнехи пекех курăнĕ.

**«Кил», «Сывлăх», «Тĕпел» кăларăмсене Елена НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

## Нарăсăн 1-мĕшĕнчен – малтанхи хакпа

***Хисеплĕ вулакансем! «Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2014 çулăн II çурринчен илсе тăмашкăн нарăсăн 1-мĕшĕнчен тытăнса пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен малтанхи хаксемпе çырăнтараççĕ***

| КĂЛАРĂМСЕМ | ИНДЕКС | ÇЫРĂНТАРУ ХАКĔСЕМ | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | | Почта уйрăмĕсенче | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
| Хыпар | 54800 | 460-86 | 279 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăмат кун | 78353 | 218-22 | 141 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | 54804 | 272-22 | 231 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | 11515 | 243-18 | 213 | 213 | 141 |
| Сывлăх | 11524 | 130-98 | 111 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | 54806 | 122-70 | 111 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | 54838 | 226-62 | 162 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси-кил | 43887 | 102-90 | 84 | 84 | 61-20 |
| Тăван Атăл | 11529 | 251-76 | 216 | 216 | 168 |
| Капкăн | 24608 | 122-10 | 105 | 105 | 87 |
| ЛИК (Литература. Искусство. Культура) | 83429 | 127-92 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | 54807 | 220-08 | 186 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | 54847 | 695-88 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | 54802 | 192-18 | 132 | 132 | 90 |
| Самант | 73208 | 155-64 | 156 | 156 | 120 |
| Тетте | 73771 | 119-58 | 111 | 111 | 90 |

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРЎСЕМ

### ПРОДАЮ

**48. ОКНА** пластиковые, **ДВЕРИ** стальные. Заводское производство. Гарантия 5 лет. Рассрочка. Дешево. Т. 89276689303.

**49. Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках – цены от производителя. Т. 8-905-344-79-32.

**53.Отруби, зерно, к/корм**. Д-ка. Т. 89613412236.

**59. Семена кормовой свеклы** «ЛАДА» высокой репродукции. Тел.: 8(8352) 73-39-11, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**60. СЕМЕНА** высокоурожайных **томатов, огурцов, перцев** и др. Тел.: (8352) 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**66. Заборы кованые.** Т. 389587.

**64. Комнаты** в общежитии в г. Чеб-ры, пр. Тракторостроителей, д.7: **13,4 кв. м** – 750000 руб., **17,3 кв. м** – 850000 руб. Т. 89875754430.

**88. Грабли** от 23 тыс. руб., **плуги, картофелесажалки, фрезы,** косилки. Низкие цены. Все новое! Тел.: 8-927-851-68-58, 8-937-955-98-02.

**77. Теплицы: 3х6** – 12000 р., **3х8** – 15000 р. Доставка. Т. 48-16-54.

**91.Коров с телятами.** Т. 89278444500.

### КУПЛЮ

**57. Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

**93. Земельный участок** со свидетельством под ИЖС площадью не менее 40 соток, можно с ветхими постройками в Чебоксарском, Моргаушском районах. Посреднику за информацию, если сделка состоится, 2000 руб. Т. 8-927-668-03-46.

### УСЛУГИ

**18. Бурение** скважин на воду. Т. 89603021293.

**25. Установка забора** из профлиста, сетки-рабицы, секции ворот (распашные, откатные, автоматика). Гарантия. Тел. 8-917-651-80-57.

**63. Известный** Чебоксарский **экстрасенс,** маг, хиромант, астролог **Олег Боголюбов** решает любые жизненные проблемы. Т. 89674743783.

**96. Православный экстрасенс.** Т. 8-987-660-39-29.

## ЧĂВАШ НАЦИ РАДИО ПРОГРАММИ (72,41 УКВ, 105 FM хумсем çинче)

**Тунти кун, нарăс уйăхĕн 10-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 17.30-18.00 Радиовулав. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 9.30-10.00 Ялтан яла. (12+) 16.10-17.00 Социальный вопрос. (12+) 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+)10.30-11.00 Шурăм пуç. (12+) 11.30-12.00, 21.30-22.00 Çемье ăшши. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 15.30-16.00 Çĕр сум. (12+) 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 20.30-21.00 Сказочный вечер. (12+) 22.30-23.00 Кăвак хуппи. (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10,10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10,15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05- 20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Тунти кун – эрне кун**

6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00 22.00 – Хыпарсем. (12+)

8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 – Новости. (12+)

**Ытлари кун, нарăс уйăхĕн 11-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 21.30-22.00 Голос Республики. (12+) 17.30-18.00 Çĕр сум. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 10.10-10.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Ялтан яла. (12+) 9.30-10.00 Здоровая нация. (12+) 10.30-11.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 11.30-12.00, 22.30-23.00 Çемье ăшши. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-14.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 14.30-15.00 Присягая Родине. (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 16.10-16.30 Эстрадный концерт. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 18.30-19.00 Чăваш Ен - çулсем тата çынсем. (12+) 19.30-20.00 Чемпион. (12+) 20.30-21.00 Сказочный вечер. (6+) 21.30-22.00 Тема дня (12+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Юн кун, нарăс уйăхĕн 12-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00 Голос Республики. (12+) 20.10-20.30 Юрă вăчăри. (12+) 20.30-21.00 Сказочный вечер. (6+) 21.10-22.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 22.10-23.00 Путешествие в историю чуваш. (12+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.05, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

Профилактика 8.00-20.00

**Кĕçнерни кун, нарăс уйăхĕн 13-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 22.30-23.00 Радиовулав. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 14.30-15.00, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Голос Республики. (12+) 9.30-10.00 Тема дня. (12+) 10.10-10.30, 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 10.30-11.00, 18.30-19.00 Чăваш Ен - çулсем тата çынсем. (12+) 11.10-12.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-14.30 Азы православия. (12+) 15.10-16.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 19.30-20.00 Сказочный вечер. (6+) 20.30-22.00 Çичĕ юрă. (12+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Эрне кун, нарăс уйăхĕн 14-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00 Радиовулав. (12+) 17.30-18.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+) 8.10-8.30, 10.10-10.30, 14.10-14.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Голос Республики. (12+) 9.10-10.00 Неформат. (12+) 10.30-11.00 Чăваш Ен - çулсем тата çынсем. (12+) 11.10-11.30, 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 11.30-12.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.30-15.00 Çемье ăшши. (12+) 15.10-16.00 Пачăшкă сăмахĕ. (12+) 16.10-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.10-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.30-20.00 Присягая Родине. (12+) 20.10-24.00 Каçхи микс. (12+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Шăмат кун, нарăс уйăхĕн 15-мĕшĕ**

6.05-7.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 7.05-7.30, 8.05-8.30, 10.05-10.30, 16.05-16.30, 18.05-18.30, 19.05-19.30 Юрă вăчăри. (12+) 7.30-8.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 8.30-9.00 Радиовулав. (12+) 11.05-11.30, 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 9.05-9.30, 15.30-16.00 Социальный вопрос. (12+) 9.30-10.00 Присягая Родине. (12+) 10.30-11.00, 16.30-17.00 Символ веры. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. 1 пайĕ. (12+) 15.05-15.30 Юрату авăрĕнче. (12+) 17.30-18.00 Шурăм пуç. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.30-20.00 Сказочный вечер. (6+) 20.05-24.00 Каçхи микс. (12+)

Çĕнĕ юрă 6.05-6.10, 7.00-7.05, 8.00-8-8.05, 9.00-9.05,10.00-10.05, 11.00-11.05, 14.00-14.05,15.00-15.05,16.00-16.05,17.00-17.05,18.00-18.05,19.00-19.05

**Вырсарни кун, нарăс уйăхĕн 16-мĕшĕ**

6.05-7.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 7.05-7.30, 9.05-9.30,18.05-18.30, 20.05-20.30 Юрă вăчăри. (12+) 7.30-8.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 8.05-8.30, 11.05-11.30, 15.05-15.30, 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 8.30-9.00 Радиовулав. (12+) 9.30-10.00 Перекресток. (12+) 10.05-11.00 Çичĕ юрă. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. 2 пайĕ. (12+) 15.30-16.00 Социальный вопрос. (12+) 16.05-17.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 17.05-18.00 Неформат. (12+) 18.30-19.00 Сирĕн сад-пахча. (12+) 19.05-20.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 20.30-21.00 Сказочный вечер. (6+) 21.05-24.00 Каçхи микс. (12+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.00-7.05, 8.00-8.05, 9.00-9.05,10.00-10.05, 11.00-11.05, 14.00-14.05,15.00-15.05,16.00-16.05,17.00-17.05,18.00-18.05,19.00-19.05

